Расул Гамзатов



# лирика



9650

РАСУЛ ГАМЗАТОВ

# Лирика

ЧӐВАШ АССР
КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар
1965



## САВĂШ КУРКИ

*Расул Гамзатова*

Хуçи юрламасан хăни шарламĕ,
Чăваш йăли-халапĕ çаплалла.
Сана савса пĕрер çавра юрлам-и,
Куç пек тулли курка тытса алла?

Инçе çулна-йĕрне эс çывăх турăн,
Цада Гамзачĕн ывăлĕ Расул!
Килех! Шап-шурă катан пир пек шуррăн
Умна сарăлса пытăр пирĕн çул!

Ĕмĕрлĕхе пăхать хăватлă Атăл
Пăлхар-чăваш куçĕпеле кунта.
Килех! Сана хăмла çĕршывĕ хапăл,
Сăра лаççи яр-уçă умăнта.



## ДЕГЕСТАНӐМ

Инçе çул-йӗртен ывӑнса таврӑнсассӑн,
Эп выртрӑм канма. Пӗшкӗнсе ман патма,
Ыйтать Дагестанӑм: мӗн эс тунсӑхлатӑн?
Е урӑх çӗре тытӑнан юратма?»

Уттартӑм тухса, çӳллӗ ту çине ухрӑм,
Каларӑм эп, хаш сывласа, хам çӗре:
«Нумай тӗле çитрӗм, нумай эпӗ куртӑм,
Анчах эсӗ — чи юратни тӗнчере.

Тен, эп юрататӑп тесе сахалрах-тӑр
Саспа тупа тунӑ, тупи çав-çавах:
Сана юрататӑп сӑмах вакламасӑр,—
Çӗр хут каласан, йӳнелет вӑл сӑмах.



## САКĂРШАР ЙĔРКЕН

Сакăр йĕрке манăн сăввăмсенче,
Сакăр çырма ту çинчен юхнă евĕр.
Тинĕс-поэзи, ун çулĕ инçе,
Пур пĕр унта, сăввăмсем, çитĕр эсĕр.

Сакăр йĕрке манăн сăввăмсенче,
Сакăр сăрт-ту каччисем пекех паттăр
Пулăр та эсĕр çĕршер çул çинче,
Ту çыннисен çĕлĕкне ан çухатăр.

Хĕç çине хĕçпе, вута кĕрсе,
Ваттисем çырса хăварнине,
Кăранташпала халь тĕрлесе,
Хăварасшăн эпĕ хут çине.



# ТӐВАТШАР ЙӖРКЕН

## ШӐПЧӐК ЮРРИ

Шӑпчӑк юрӑ юрлать, яланах ун пӗр юрӑ, ялан,
Мӗн ҫинчен-ши вӑл юрӑ? Никам та пӗлмест ҫав
ӑна.
Ман шутпа: хӑй ҫӗршывӗ ҫинчен, ун ҫинчен
пулмасан—
Урӑххи тахҫанах йӑлӑхтарӗччӗ ҫав ӑстана.